25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 23 ЫТЛАРИКУН 144(6079) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

М. И. КАЛИНИН.

Вӑрçӑ çулталӑкӗ

Пӗр çул каярах радио ССР Союзӗнчи халӑхсене тата мӗнпур тӗнчене фашистла Германия Совет Союзӗ çине ултавлӑн килсе тапӑнни çинчен пӗлтерчӗ. Пирӗн çине Германия килсе тапӑнма пултарасси çинчен пирӗн халӑх шутланӑ пулсан та, тӗплӗнрех шухӑшласа пӑхсан, Германин хӑйне валли çӗнӗ фронт тума нимӗнле сӑлтав та çук пек туйӑнатчӗ. Çынсем вара çакна шута илсе çапла калатчӗç: гитлерла правительствӑн авантюристла политики кӑна Германие çавнашкал пачах та шанчӑксӑр ӗçе тӗртсе кӗртме пултарать, тетчӗç. Чӑннипех те, çавнашкал авантюристла политика Германире çиеле тухрӗ те ӗнтӗ. Германия, Çурçӗр-Хӗвеланӑç Европӑра çӑмӑл çӗнтерӳсем туса, анчах та Англие хирӗç вӑрçӑ пӑнӑ çӗрте çӗнтерейми йывӑрлӑхсем çине пырса тӑрӑнса, Совет Союзӗ çине килсе тапӑнчӗ; вӑл хӑвӑртрах çӗнтерӳ туса, кайран ССР Союзӗн ресурсӗсемпе усӑ курса Англие, унтан вара Америкӑна пырса çапма шутланӑ пулнӑ.

Юн тӑкӑнакан хаяр вӑрçӑ пуçланни çулталӑк иртрӗ, çак вӑрçӑ вӑл Германи командованийӗ уҫ çинчен шухӑшланинчен нумай çӑмӑл ӑсларах пулнине кӑтартса пачӗ. Германи командованин чи кӗске планӗсем тӑрӑх Совет Союзӗн хӑватне виç-тӑватӑ уйӑх хушшинче е çирӗк мӗнле пулсан та хӗллехи сивӗсем лариччен çӗмӗрсе тӑкма палӑртнӑ пулнӑ. Çакӑ вӑл Германи интендантстви хӗллехи тумтирсем хатӗрлесе хуманнинчен те лайӑх курӑнать. Гитлер хӗтӗртсе пыракан фашистла агитаци вара вӑрçӑ уйӑх çурӑ е икӗ уйӑх кӑна пырать тесе палӑртнӑ пулнӑ.

Малтанах Германи войскисем чылай пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе куçса пычӗç. Германи сводкисенче çӗнтерӳсем çинчен пӗтӗм тӗнче илтӗнмелле кунран-кун сулӑнатчӗç. Анчах та вӑрçӑн çав малтанхи тапхӑрӗнче те нимӗç салтакӗсен фронтри [illegible] Германи пичечӗнче, паллах, пичетлесе [illegible] Хӗвелтухӑçӗнчи вӑрçӑ пӗтрӗ те Хӗвеланӑçӗнчи вӑрçӑ пек марри çинчен, Германи бронетанковӑй тата моторизованнӑй дивизийӗсем хӑвӑртлӑн малалла куçса пыни техникӑпа чӗрӗ вӑй тӗлӗшӗнчен çав тери пысӑк çухатусем тунипе çыхӑнса тӑни çинчен калатчӗç.

Кунта прӗксӗрех Лев Толстойӑн «Çынна çӗр нумай кирлӗ-и?» текен юмахне аса илетӗн. Çав юмахра çын [illegible] хӗвел тухнӑ чухне пуçласа хӗвел анни çӗре çити пултарнӑ таран çӗр илме тивӗçли çинчен каласа пани. Этем вара çав вӑхӑт хушшинче мӗнле те пулин ытларах чупса çӗр ытларах çавӑрса илме хапсӑннӑ. Анчах та вӑл çитмелли çӗре чупса çитнӗ те сывлӑшӗ [illegible] вилсе кайнӑ, вара ӑна çӗр çине пытарма пӗтӗмпе те виçӗ аршӑн кӑна çӗр кирлӗ пулнӑ. Çапла, Гитлер та [illegible] унӑн миллионлӑх салтакӗсем совет çӗрӗ айӗнче хӑйсен участокне тупрӗç.

Пуçланнӑ вӑрçӑ тата унӑн характерне ӑнланса илме, çав вӑрçа [illegible] совет халӑхне [illegible] кирлӗ пулчӗ. Сталин юлташ 1941 çулхи 3-мӗшӗнче çӑмах тухса калакан совет халӑхне çапла чӗнчӗ: пирӗн тӑван çӗршыв çине [illegible] совет çыннисен пӗтӗмпӗшӗ [illegible] хӑват чунлӑ пулма, [illegible] мирлӗ строительство вӑхӑтӗнчи шухӑш-кӑмӑлсене пӑрахмалла, тет.

Хамӑрӑн [illegible] Хӗрлӗ Çар хамӑрӑн территорине пӗр-пӗр участокӗнче чакса тухни чухне, железнодорожникӗсем паровозсемпе вагонсен составӗсене [illegible] рабочисем хӑйсен тата фабрикисене [illegible] колхозниксем выльӑх-чӗрлӗ [illegible] хӑваласа килетчӗç, хӑйсем илсе [illegible] тума пултарайманнине [illegible] хӑваратчӗç. Хӗрӗхсӑрла [illegible] пахалама пулмай [illegible] партизансен отрячӗсем [illegible] Совет çӗрне [illegible] кайнисем.

Хӑлӑх [illegible] ирттӗ [illegible] шанчӑклӑн [illegible] вӑхӑтсем калама пулать: мирлӗ вӑхӑтри шухӑш-кӑмӑл хал тӑрса юлчӗ, тӑшман хӑйсене пирӗн халӑх пӗтӗмӗшпе хӗç-пӑшал тытса тӑрать.

Совет халӑхӗ пулса тӑнӑ обстановкӑна [illegible] фашистла Германи Совет Союзне тапӑнса [illegible] тӗнчене [illegible] сасӑпа Совет Союзне [illegible] Сталин юлташ [illegible] хӑйне [illegible] ССР Союзӗ политика тӗ-

лӗшпе тунӑ питех те пысӑк ӑнӑçу вара пысӑк вырӑнта тӑракан тата нумай вӑхӑтлӑха пыракан фактор пулса тӑрать; çак фактор никӗсӗ çинче фашистла Германие хирӗç пыракан вӑрçӑра Хӗрлӗ Çарӑн вӑрçӑ ӗçӗсенче татӑклӑ çитӗнӳсем пулса пымалла».

Чӑн та ӗнтӗ, совет çарӗн нимӗç пусмӑрçисене хирӗç тӑрас пултарулӑхӗ кунран-кун ӳссе пычӗ, совет çарӗ тӑшмана хирӗç хаяррӑнрах та хаяррӑнрах çапӑçма тытӑнчӗ, нимӗçсем совет территорийӗн кашни километрне тытса илни вӗсемшӗн хаклӑрах та хаклӑрах лара пуçларӗ, нимӗçсен материальнӑй средствисемпе çын ресурсӗсем ытларах та ытларах пӗтсе пычӗç.

Ноябрь уйӑхӗ тӗлне нимӗçсем Мускав патне пымалли инçетри вырӑнсене пырса çитрӗç. Çав вӑхӑтра ӗнтӗ, Гитлерӑн куçне Мускав унӑн аллинчех пек курӑнса кайнӑ чухне, Сталин юлташ Мускав Совечӗн ларӑвӗнче 1941 çулти ноябрӗн 6-мӗшӗнче тухса каланӑ хӑйӗн сӑмахӗнче: нимӗç империалисчӗсене тата вӗсен çарӗсене пурӗ-пӗрех çапса аркататпӑр, тесе шанчӑклӑн пӗлтерчӗ. Анчах çакӑн çинчен каласа, Сталин юлташ çӗнтерӳ тума мӗн кирлине паллӑ турӗ: «Пирӗн çарпа пирӗн флота хамӑрӑн пӗтӗм çӗршыв енчен ӗçлӗн те активлӑн пулӑшса пыни кирлӗ; пирӗн рабочисемпе служащисем, арçынсемпе хӗрарӑмсем, предприятисенче ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлени тата вӗсем фронта валли танксем, танксене хирӗç пемелли пӑшалсемпе орудисем, самолетсем, тупӑсем, минометсем, пулеметсем, винтовкӑсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлӗ; пирӗн колхозниксем, арçынсемпе хӗрарӑмсем, хӑйсен уйӗсенче [illegible] ӗçлесе фронта тата çӗршыва [illegible] промышленноçа валли [illegible] ытларах парса пыни кирлӗ; пирӗн пӗтӗм çӗршыв тата ССР Союзӗн мӗнпур халӑхӗсем организациленӗ пӗрлӗхлӗ çар лагерӗ, пирӗн çарпа тата флотпа пӗрле хамӑр тӑван çӗршывӑн чысӗшӗн, ирӗклӗхӗшӗн, нимӗç çарӗсене çапса çӗмӗрессишӗн [illegible] вӑрçӑ туса пыракан лагерь пулса тӑни кирлӗ».

Çав вӑхӑтран пуçласа вӑрçӑри [illegible] Хӗрлӗ Çар [illegible] куçса пычӗ. Нимӗç командованийӗ Мускава тытса илес [illegible] Хӗрлӗ Çар [illegible] Ростова Тихвин патӗнче [illegible] Çавӑн [illegible] Мускав патӗнче [illegible] Сталинград [illegible] тесе [illegible] çухатусем [illegible] сахал мар техника [illegible] çухатусем тӳссе, [illegible] Хӗвеланӑçнелле чакма тытӑнчӗ.

Çапӑçусенчи [illegible] халӑх çарӗ [illegible] Совет çӗрӗнчен [illegible]

Вӑрçӑ фронтӗсенче пулса тӑнӑ пӑлтӑрӑ [illegible] Сталин юлташ [illegible] приказӗнче [illegible] Хӗрлӗ Çар, Тинӗс-Çар Флочӗ тата пӗтӗм совет халӑхӗ умне 1942 çулла [illegible] нимӗç фашистла войскисене пӗтерме [illegible] тата [illegible] çӗре [illegible] çапла калать.

«Çав [illegible] Хӗрлӗ Çарӑн мӗн кирлине пурте пур [illegible] Хӗрлӗ Çара пархатарлӑ тӑшмана [illegible] паха техникӑпа туллин усӑ курма вӗренсе çитесси пулса тӑрать. Иккӗленмелли çук, пирӗн Хӗрлӗ Çар тата Тинӗс-Çар Флочӗ çак задачӑна пурнӑçа кӗртме пултарӗç.

Пирӗн войскӑсем нимӗç захватчикӗсене хирӗç кӗрешнӗ çӗрте мӗн пулса иртни çине çавӑрӑнса пӑхсан, хӑшпӗр итогсене тума пулать.

Нимӗçсем пӗр хут вӑйлӑн çапнипе пирӗн çара аркатса тӑкма, пирӗн çӗршыв пурнӑçӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан центрсене тытса илме, çапла вара совет халӑхне çӗнтерме шутласа, пирӗн çине систермесӗр, кӗтесрен тапӑнчӗç.

Çав план пӗтӗмпех путланса ларнине халӗ ӗнтӗ пурте курассӗ. Нимӗçсем тытса илнӗ хуласемпе территорисем çинчен эпир мӗнпур промышленноçа нимӗçсен бомбардировщикӗсем вӗçсе пырса тапӑнма пултарайман вырӑнсене куçартӑмӑр çеç мар, çав промышленность пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех ӗçлет тата производство хӑвӑртлӑхӗсене уйӑхран уйӑхах ӳстерсе пырать.

Хӗлле Гитлерпа унӑн пичечӗ çуркунне наступлени тӑвасси çинчен çине тӑрсах шавларӗç пулсан, çав наступлени пулаймарӗ. Вӑрçӑри ӗçсем малашне мӗнле аталанса пыни çинчен калас пулсан вара, — Германи çарӗ пӗтӗм фронтра пур çӗрте те наступлени туса пыма вӑй çитерейместь, тесе шанчӑклӑнах калама пулать. Нимӗçсен çарӗ халӗ ӗнтӗ вӑрçӑ пуçланнӑ чухнехи çар мар, вӑл ӳт-пӳ вӑй-халӗ тӗлӗшӗнчен те, шухӑш-кӑмӑл тӗлӗшӗнчен те нумай хавшанӑ.

Паллах ӗнтӗ, Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронт пек çавтери пысӑк фронтра нимӗçсен войскисем пӗр-пӗр участокра наступлени тума пултарассӗ. Анчах, вӗсем те пӗр-пӗр вырӑнта пулакан нумая пыман наступленисем çеç пулӗç тата çакӑнпа пӗрлех нимӗçсене питех те хакла ларӗç, тесе шутлатӑп эпӗ.

Пурнӑç ырӑ пирки мар ӗнтӗ нимӗçсем хальхи вӑхӑтра фронтӑн пӗр-пӗр участокӗнче пӑртак ӑнӑçу тусанах, хӑйсен йӑлипе, ӑна темтери пысӑклатса кӑтартса, çав ӑнӑçӑва тума союзниксем пулӑшрӗç тесе вӗсене мухтама тӑрӑшассӗ, вӗсене хӑйсем майлӑ ытларах çавӑрас тесе йӑпӑлтатассӗ. Чӑн та вара, халӗ Германи союзникӗсен дивизийӗсене — финсен, венгерсен, румынсен, итальянецсен дивизийӗсене фронтран илсе каяс пулсан, вӑрçӑ туса пырас тӗлӗшпе вара нимӗçсемшӗн питех те юрӑхсӑр картина пулса тӑнӑ пулӗччӗ. Союзниксем нимӗçсене политика тӗлӗшӗнчен кӑна мар, чӗртавар та апат-çимӗç сӑрхӑнтарса илмелли çӑлкуç вырӑнне пулса кӑна мар, çавӑн пекех тата тӳрремӗнех вӑрçӑри вӑй пулса тӑнипе те кирлӗ. Нимӗçсен çарӗ вак-тӗвек, тӗрлӗ тӗслӗ çар пулса каять, ку вара 1941 çулти çар мар.

Нимӗçсен войскисем урӑх ӑнӑçусем тӑвайман пирки, вӑрçӑ вӑраха кайнӑ пирки, вӑрçӑ тӗрӗс ӗç пулса тӑманнине ӑнланса илнӗ пирки нимӗç халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлӗ хуçӑлнӑ. Çакӑ вара вӑрçа хирӗçле шухӑшсем ытларах та ытларах пухӑнса çитесси патнелле кӗретӗнех илсе пырать.

Фашистсем çапла шутланӑ: ССР Союзӗ çине тапӑнни вӗсене Англипе мир тума тата Америкӑна хӑйсем енне çавӑрма май парӗ, тенӗ. Çак ухмахла ӗмӗт пурнӑçа кӗреймерӗ, гитлеровецсем Англипе Америкӑна улталама шутланинчен ӗç тухмарӗ.

Нимӗçсен оккупациленӗ çӗршывсенчи вӑрӑ-хурахла çаратӑвӗпе террорӗ, Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтри ӑнăçсӑрлӑхсем, пуринчен те пысӑк сӑлтав — Хӗрлӗ Çар фашистла войскӑсене çапса аркатнисем, — çаксем пурте нимӗçсем тытса илнӗ çӗршывсенче патриотсен кӗрешӗвне вӑйлатассӗ, Германин Европӑри тылне хавшатассӗ, çавсене пула фашистсен влаçра тӑракан ушкӑнӗсен оккупациленӗ çӗршывсенче полиципе усӑ курассине вӑйлатма тата карательнӑй отрядсене нумайлатма тивет.

Нимӗçсем йышӑнса илнӗ совет облаçӗсенче аталанса пыракан партизанла движени кунран кунах ӳссе тата вӑйланса пырать, вӗсене хирӗç кӗрешмешкӗн нимӗçсен ирӗксӗрех чылай çар чаçӗсене яма тивет. Хӑшпӗр чухне нимӗçсем партизансен отрячӗсене хирӗç çапӑçнӑ çӗрте «чаплӑ çӗнтерӳсем туни» çинчен çырассӗ; вӗсем хӑйсен тылӗнче, партизансен отрячӗсем çӳренӗ çӗрте, халӑх пурӑнакан 10—15 вырӑна йышӑнса илни çинчен каласа кӑтартассӗ. Анчах пӑртак вӑхӑт иртсенех партизансен отрячӗсем нимӗçсен гарнизонӗсене çӗнӗрен çапса аркатни тата нимӗçсенчен халӑх пурӑнакан пунктсене каялла туртса илни çинчен вӗсем нимӗн те шарламассӗ. Вырӑс тылӗ чӑннипех те фашистсен урисемшӗн ытла та вӗри пулса çитрӗ. Партизансем нимӗçсене çапа-çапа аркатнисем вара вӑрçӑ ӗçӗсем пӗтӗмӗшлӗн аталанса пынӑ çӗрте пысӑкрах та пысӑкрах вырӑн йышӑнса тӑма пуçлассӗ. Хӑюллӑнах çакна калама пулать: партизансем кашни

уйӑхрах нимӗçсен войскисемпе боеприпассем тиенӗ вуншар поезчӗсене ӳпӗнтерсе ярассӗ, кулленхи çапӑçусенче, партизансен отрячӗсем нимӗçсен çар чаçӗсене чылайӗшне пӗтерсе тӑкассӗ. Нимӗçсем оккупациленӗ совет облаçӗсенче партизанла движени нимӗçсен çарӗсемшӗн пысӑк фронт пулса каять, çакӑ вара паллах ӗнтӗ, нимӗçсене нумай сиен кӳрет.

Германин материальнӑй резервӗсем тата çынсен резервӗсем сахалланса пырассӗ, çав резервсем уйӑхсеренех хӑвӑртрах та хӑвӑртрах чакса пыма пуçлассӗ.

Юлашкинчен çакна калас пулать: вӑрçӑ пуçланнӑ чухне нимӗçсен командованийӗ Совет Союзне хирӗç туса пыракан вӑрçӑ фронтӗнче лартнӑ стратегиллӗ задачӑсенчен пӗри те пурнӑçа кӗмен.

Иртнӗ çулталӑкра пулса пынӑ вӑрçӑра пирӗн çар испытанисен хаяр шкулӗ витӗр тухрӗ. Вӑл тӑшмана пӗлсе çитрӗ, унӑн вӑйлӑ тата хавшак енӗсене пӗлчӗ, тӑшман техникинчен хӑрамасӑр çапӑçма тата унӑн çиелти витӗнчӗкне чӑнчӑн вӑйӗнчен уйӑрса, туйса илме вӗренсе çитрӗ. Пирӗн командирсем çак вӑхӑтра тӑшмана хирӗç кӗрешнӗ çӗрте чылай опыт туянчӗç, красноармеецсем çирӗп тӑма хӑнӑхса çитрӗç. Пирӗн çарӑн шухӑш-кӑмӑлӗ, совет халӑхӗн чун-хавалӗ пекех, питех те çӳлӗ вырӑнта тӑрать тесе çирӗппӗнех калама пулать. Урӑхла пулма та пултараймасть, мӗншӗн тесен кашни красноармеец вӑл аслӑ тӗллевшӗн — тӑван çӗршывӑн чыслӑхӗшӗн тата никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапӑçнине пӗлет. Çакӑ ӑна кӗрешӳре çирӗплетсе пырать, тӑшмана совет çӗрӗ çинчен хӑваласа кӑларма, тӑшмана пӗтерсе тӑкма хавхалантарать.

Пирӗн промышленность çар валли кирлӗ материалсен производствине уйӑхран уйӑхах ӳстерсе пырать. Вӑл вӑрçӑ условийӗсене тивӗçлӗ пек лайӑхрах та лайӑхрах ӗçлекен пулса пырать, эпир, вӑрçӑ пуçланни пӗр çулталӑк тултарнӑ тӗле Хӗрлӗ Çара промышленность продукцийӗ парса тӑрасси начарланмарӗ, татах та ытларах лайӑхланчӗ, тесе мухтанма пултаратпӑр.

Савӑнӑçлӑнах çакна палӑртма пулать: вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи кансӗрлӗхсем пулсан та, ялхуçалӑхӗнче те акакан çӗр лаптӑкӗ уйрӑмах хӗвелтухӑçӗнчи облаçсенче, пысӑкланса пырать. Хальхи вӑхӑтра ялхуçалӑхӗ умӗнче тӑракан задачӑсене халӗ ӗнтӗ пирӗн колхозниксем чыслӑн пурнӑçа кӗртессине çирӗппӗнех шанса тӑма пулать.

Пӗтӗмӗшпе илсе каласан, вӑрçӑ пуçланни пӗр çулталӑк тултарнинчен çакӑ лайӑх курӑнать: пирӗн çӗршыв экономикин çирӗп никӗс пур.

Пирӗн халӑхӑн шухӑш-кӑмӑлӗ çавтери çирӗп; тӑшман çине хаяр курайманлӑхпа пӑхасси, тӑшмана ним хӗрхенмесӗр çине-çинех çапма кирлине ӑнланасси халӑхра ӳсрӗ.

Пирӗн пӗтӗм тӗнчери положени халӗ нихӑçанхинчен те ытларах тӗреклӗ. Германия ССР Союзне хирӗç вӑрçӑ пуçланӑ кунранпах Англия тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Совет Союзне пулӑшас çул çине тӑчӗç, гитлерла Германие тата Европӑра унпа пӗрле вӑрçакан çӗршывсене хирӗç пыракан çӑрçӑра союзлӑ пуласси çинчен, вӑрçӑ пӗтнӗ хыççӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗçлесе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси çинчен халӗ пирӗн çӗршывпа Англи хушшинче договор тунӑ.

Вӑрçӑн малтанхи тапхӑрӗнче Америка нейтральнӑй çӗршыв пулнӗ, унтан вара вӑрçакан çӗршыв пулса тӑчӗ. ССР Союзӗпе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хушшинче те агрессие хирӗç вӑрçас ӗçре пӗр-пӗрне пулӑшса тӑмалли принципсем çинчен килӗшӳ тунӑ. Америкӑпа Англия пире çар хатӗрӗсемпе материалсем парса пулӑшасси ытларах та ытларах вӑйланса пырать.

Çак фактсем пурте çапла калама тулли шанчӑк парассӗ: тӑшмана аркатса тӑкатпӑрах.

Совет халӑхӗ вара çав ултавлӑ та тискер тӑшмана çӑмӑллӑнах çӗнтеретӗп тесе хӑйне-хӑй нимӗнле суя шухӑшсемпе те лӑплантарса лармасть. Тӑшман хӑйӗн тирне сыхласа хӑварма мӗнпур вӑйӗпе тӑрӑшӗ. Тӑшмана аркатса тӑкманха, унтан та ытларах — ӑна тӗппипех пӗтерсе тӑкман. Унӑн халӗ çар техники чылай пур-ха. Гитлерла бандӑн ӗçӗсем мӗн чухлӗ шанчӑксӑртарах пулӗç, вӑл çавӑн чухлӗ ытларах чееленсе ултлама, ирсӗр ӗçсем тума хӑтланӗ. Анчах гитлеризм пурпӗрех пӗтмелле.

Совет халӑхӗ хӑй çӗнтерессине çирӗппӗн шанса тӑрать, çак çӗнтерӗве вара кашни кун фронтра тата тылра, фабрикӑсенче, шахтӑсенче, колхозсенче, малти позицисенче, окопсенче, партизансен отрячӗсенче çӗнсе илме кирлине пӗлет. Хӑйсен вилӗмлӗ тӑшманне пӗтерсе тӑкма хурçӑ пек çирӗп шухӑш тытнӑ совет çыннисене нимӗнле жертвӑсемпе йывӑрлӑхсем те чарса тӑма пултараймассӗ. Пирӗн задача: çавна пурнӑçа кӗртессине пур майсемпе те васкатасси.

(«Известия», июнӗн 21-мӗш).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Çарӑн сывлӑш-çар вӑйӗсен начальство составне Совет Союз Геройӗн званине парасси çинчен

Правительство хушнипе инçете кайса килмелли ответлӑ вӗçеве пурнӑçа кӗртнӗ чухне хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн çаксене Ленин орденӗпе «Золотая Звезда» медаль парса, Совет Союз Геройӗн званине парас:

1. Майора Эндель Карлович **Пусэпа.**
2. Майора Сергей Михайлович **Романова.**
3. Майора Александр Павлович **Штепенкӑна.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 20-мӗш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Çарӑн Сывлӑш-Çар вӑйӗсен начальство составне Совет Союз Геройӗн званине парасси çинчен

Нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн тата çак ӗçре хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн, çаксене **Ленин** орденӗпе **«Золотая Звезда»** медаль парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас:

1. Старши лейтенанта Георгий Александрович **Алексеева**
2. Майора Сергей Александрович **Асямова.**
3. Капитана Серафим Кириллович **Бирюкова.**
4. Кӗçӗн лейтенанта Иван Тимофеевич **Вдовенкӑна.**
5. Капитана Иван Егорович **Гаврыша.**
6. Лейтенанта Никита Васильевич **Гоманенкӑна.**
7. Лейтенанта Борис Дмитриевич **Еремина.**
8. Капитана Александр Кузьмич **Кувшинова.**
9. Старши лейтенанта Василий Николаевич **Осипова.**
10. Старши лейтенанта Юрий Николаевич **Петелина**
11. Капитана Яков Иванович **Пляшечника.**
12. Капитана Валентин Георгиевич **Ситнова.**
13. Капитана Федор Федорович **Степанова.**
14. Старши лейтенанта Павел Андреевич **Таранъ.**
15. Лейтенанта Дмитрий Захарович **Тарасова.**
16. Старши лейтенанта Степан Андреевич **Харченкӑна.**
17. Капитана Василий Михайлович **Чистякова.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 20-мӗш

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Çарӑн начальство составне Совет Союз Геройӗн званине парасси çинчен

Нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртнӗшӗн тата çак ӗçре хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн, çаксене **Ленин** орденӗпе **«Золотая Звезда»** медаль парса, **Совет Союз Геройӗн** званине парас:

1. Старши сержанта Мария Карповна **Байдӑна**
2. Ефрейтора Иван Иванович **Богатыре.**
3. Кӗçӗн политрука Михаил Леванович **Гахонидзене**
4. Политрука Георгий Константинович **Гловацкие.**
5. Ефрейтора Павел Дмитриевич **Линнике.**
6. Старши лейтенанта Николай Иванович **Спирина.**
7. Кӗçӗн лейтенанта Абдулхан Загирович **Умеркина**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнӗн 20-мӗш.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

Машинно-тракторнӑй станцисенчи комбайнерсене ӗçшӗн хушса тӳлесси çинчен

Машинно-тракторнӑй станцисенчи комбайнерсене колхозсенче тырпула пухса кӗртес ӗçе лайӑх туса ирттернӗшӗн хавхалантарас шутпа ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ çапла йышӑннӑ:

1. Колхозсене тӗштырӑ культурисене тата хӗвелçаврӑнӑшне комбайнсемпе лайӑх пухса кӗртнӗшӗн комбайнерсене МТС-ран тӳленисӗр пусне тӗштырӑ парса çакӑн пек виçесемпе хушса тӳлеме сӗнес:

а) Тырпула 15 футлӑ комбайнпа пухса кӗртнӗ чухне комбайнера, вӑл комбайн пуçне кункаçиччен 30 центнертан пуçласа 80 центнера çити çапнӑ пулсан, 30 центнертан ирттерсе çапнӑ кашни центнершӑн 300-шер грамм тӗштырӑ памалла, 80 центнертан ирттерсе çапнӑ кашни центнершӑн вара 400-шер грамм тӗштырӑ памалла;

б) тырпула 20 футлӑ комбайнпа пухса кӗртнӗ чухне комбайнера, вӑл комбайн пуçне кун каçиччен 40 центнертан пуçласа 90 центнера çити çапнӑ пулсан, 40 центнертан ирттерсе çапнӑ кашни центнершӑн 200-шер грамм тӗштырӑ памалла, 90 центнертан ирттерсе çапнӑ кашни центнершӑн вара 300-шер грамм тӗштырӑ памалла;

в) Архангельск, Вологда, Горький, Иваново, Калинин, Киров, Ленинград, Мускав, Орел, Смоленск, Рязань, Тула, Ярославль, Молотов, Свердловск, Чита, Иркутск облаçӗсенчи, Хабаровск тата Приморски крайсенчи, Коми, Мари, Удмурт, Якут, Бурят-Монгол АССР-сенчи, Азербайджан, Грузин, Армян тата Карело-Финн ССР-сенчи машинно-тракторнӑй станцисенче ӗçлекен комбайнерсене—15 футлӑ комбайнпа пухса кӗртнӗ чухне çапнӑ тыррӑн 20 центнерӗнчен пуçласа тата тырпула 20 футлӑ комбайнпа пухса кӗртнӗ чухне çапнӑ тыррӑн 30 центнерӗнчен пуçласа хушса тӳлемелле.

г) Тырпула çурçӗрти комбайнпа пухса кӗртнӗ чухне комбайнера, вӑл комбайн пуçне кун каçиччен 10 центнертан пуçласа 20 центнера çити çапнӑ пулсан, 10 центнертан ирттерсе çапнӑ кашни центнершӑн 400-шер грамм тӗштырӑ памалла, 20 центнертан ирттерсе çапнӑ кашни центнершӑн вара 500-шер грамм тӗштырӑ памалла.

2. Тырпула комбайнпа пухса кӗртнӗ чухне, комбайнер айӑпне пула çапнӑ тӗштырӑ таса мар пулнӑ пулсан, МТС директорӗсене комбайнерсене натурӑпа хушса тӳлекен виçерен 30 процентне чакарма хушас.

3. Икӗ е виçӗ комбайн кӑкарса ӗçлекен агрегатӑн начальникӗ пулса тӑракан комбайнера натурӑпа хушса тӳлемелли виçе 10 процент ӳсет.

4. МТС директорӗсемпе колхоз председателӗсене кашни комбайнпа çапнӑ тӗштырра тата комбайнера ӗçшӗн натурӑпа хушса тӳлессине куллен тӗплӗн шута илсе пыма хушас.

5. Колхозсем комбайнерсене ӗçшӗн натурӑпа хушса тӳлессине комбайнер çав колхозра хӑйӗн ӗçне пӗтернӗ хыççӑн татмалла тӑвас.

В. М. Молотов доклачӗ пичетленсе тухать

Политикӑллӑ литературӑн государство издательстви нумай тиражпа «Англипе Совет Союзӗ хушшинче 1942 çулти майӑн 26-мӗшӗнче тунӑ договора ратификацилени» ятлӑ брошюрӑна пичетлесе кӑларать. Брошюрӑра Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташӑн СССР Верховный Советӗнче 1942 çулти июнӗн 18-мӗшӗнче тунӑ доклачӗ тата гитлерла Германие, Европӑри унпа пӗрле вӑрçакан çӗршывсене хирӗç пыракан вӑрçӑра союзлӑ пуласси çинчен, вӑрçӑ пӗтнӗ хыççӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗçлесе пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси çинчен Совет Союзӗпе Великобританири Пӗрлешӳллӗ Королевство хушшинче 1942 çулти майӑн 26-мӗшӗнче Лондон хулинче тунӑ договорӑн тексчӗ пулать. Çавӑн пекех брошюрӑна СССР Верховный Совечӗ В. М. Молотов юлташӑн доклачӗ тӑрӑх Правительствӑн тулашри политикине ырлани тата договора ратификацилени çинчен йышӑннӑ постановление те кӗртнӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 21-мĕшĕнче фронтăн **Севастополь** участокĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисен нумай тата хаяр атакисене сире-сире ярса çапăçнă. Питех те пысăк çухатусем тÿссе, противник пирĕн оборонăна савăлласа кĕме пултарнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлтăр улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, июнĕн 14-мĕшпе 20-мĕш хушшинче сывлăшри çапăçусенче противникăн аэродромĕсем çинче тата зенитнăй артиллерипе персе нимĕçсен 264 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çав вăхăт хушшинчех 103 самолет пĕтнĕ.

* * *

Июнĕн 20-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 16 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинине, 2 орудине, 14 минометне, 20 зенитнăй орудине, темиçе бензоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче противникăн пехоти 2 полка çити вăйĕпе, танксем тата авиаци пулăшнипе, пирĕн чăçсене атакăланă. Питех те пысăк çухатусем тÿссе, нимĕçсем пĕр тĕлте юханшыв урлă каçса, пирĕн войскăсене хĕссе пăртак каялла чакарнă. Пирĕн боецсем, контратакăна кĕрсе кайса, противника çав юханшыва ÿпĕнтерме те хăйсем юханшывăн хĕвеланăç енне каçса, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нумай гитлеровецсем вилсе е аманса юлнă тата хĕçпăшал чылай пăрахса хăварнă.

* * *

Пирĕн танксен подразделенийĕ (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç çапăçса, унăн 19 дзотне, 43 блиндажне, 4 танкне, артиллерин 2 батарейине тата уйрăмăн 12 орудине, 3 минометне, танксене хирĕç пемелли орудисен 2 батарейине тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн штурмовик-самолетсен ушкăнĕ фронт линийĕ тĕлĕнче нимĕçсен 7 истребительпе тĕл пулнă. Штурмовиксене хÿтĕлесе пынă летчик-истребитель старши лейтенант Максимов нимĕçсен истребителĕсене хирĕç хăюллăн çапăçăва кĕрсе кайнă, çапла вăл штурмовиксене боевой задание пурнăçа кăларма пулăшнă. Максимов юлташ, противникăн 7 самолетне хирĕç пынă сывлăшри çапăçура пĕр «Мессершмитта» персе антарнă хыççăн, хăйĕн аэродромĕ çине ăнăçлăнах таврăннă.

* * *

4 кун хушшинче снайпер Макулевич юлташ 15 гитлеровеца, снайпер Солснин юлташ 13 гитлеровеца, Мазур юлташ — 11 нимĕçе, Ясаней Зариев юлташ — 6 нимĕçе тата снайпер Конюхов юлташ противникăн 4 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Партизансен «Батя» ятлă отрячĕ çак кунсенче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен атакине сирсе янă. Çав çапăçура партизансене хирĕç вăрçса гитлеровецсем чылай пысăк çухатусем тÿснĕ.

* * *

Аялархра нимĕçсен вилнĕ обер-фельдфебелĕн, фашистсен парти членĕн Эрих Рюллингерăн дневникĕнчи уйрăм сыпăксене илсе пичетлетпĕр:

«**1941 çулти июнĕн 21 мĕш.** Эпĕ темĕн пекех кĕтнĕ вăхăт килсе çитет! Эпир каллех ĕçе тухса каятпăр. Каç пулса килсенех хыпаланса хатĕрленме пуçларăмăр. Хĕçпăшала тата материаллă чаçа юлашки хут тĕрĕслесе тухрăмăр. Шухăш-кăмăлсем питех те лайăх. Вăрçă, курăнсах тăрать, икĕ уйăхран ытла пырас çук. Россия — пит те пуян çĕршыв...

Августăн 20-мĕш. Вăрçă пуçланнăранпа 2 уйăх çитрĕ. Вырăссем шутсăрах хаярран хирĕç тăраççĕ, вĕсем французсем пек пуласшăн мар. Эпир сахаллансах пыратпăр. Ротăра çĕнĕ çынсем нумай ĕнтĕ.

Октябрĕн 12-мĕш. Вырăссем пирĕн çине шарлаттарса çумăр çунă пек бомбăсемпе снарядсем тăкаççĕ. Артиллери полкĕнчен мĕнпурĕ те татăк-кĕсĕксем анчах тăрса юлчĕç. Орудисен расчечĕсем хăйсен тупписене пăрахса тарса хăтăлма пикенчĕç, анчах та вĕсене вырăссен татăкĕсем хăваласа çитрĕç... Эпĕ календарьпе Россия картти çине питĕ хăраса пăхатăп. Пирĕн тĕллев патне çитсе тухиччен тем пекех инçе-ха. Вăрçă çавăн пек вăраха каясса кам шухăшлама пултарнă?

Декабрĕн 16-мĕш. Эпир каялла чакатпăр. Пăхма та намăс, куç-пуç ан курăр тăрччĕ. Вырăссем хĕл кунĕсенче пире тивмĕçинччĕ... Ку асаплантаракан сивĕсене чăтма çук. Лазарет шăнса пăсăлнă салтаксемпе тулса ларнă. Эпĕ Артур Колькштейн унтер-офицера лазарета леçрĕм. Врач нимĕн те пулман пекех ăна çапла каларĕ: «санăн урусене таткалла пулать, унсăрăн—вилĕм»—терĕ... Хăçан пĕтĕ-ши ку пăтрашу?

1942 çулти февралĕн 10-мĕш. Ĕнтĕ миçемĕш хут пире улăштарма сăмах параççĕ. Чике тăршшĕ лартни кăна, ĕненме юратакан тăм шăхличсене лăплантарма паракан эмел çеç вăл. Часах улăштармалăх çын та тăрса юлас çук. Пурте юр кĕрчĕсем ăшĕнче вилсе пĕтĕç...

Апрелĕн 28-мĕш. Резервистсем шăнасем пекех пĕтеççĕ. Вилнисен спискĕ вăрăмлансах пырать. Нимĕç халăхĕ çавăн чухлĕ пĕтни ахаль харама кайни кăна пулмĕ-ши? Вăрçă çаплах тăсăлса пырать, ку ирсĕр ĕç чарăнасси халĕ те вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.

Майăн 19-мĕш. Вăй-халсем, паттăрлăх çук ĕнтĕ пирĕн. Текех эпир наступленилле пысăк çапăçусем тума юрăхлă салтаксем мар.

Июнĕн 12-мĕш. Эпир пĕр вырăнтах тапăртатса тăратпăр. Тăван çĕршывран çавтери нумай вăхăта тухса килмелле пуласси-не эпĕ пĕлтĕр тем пулсан та ĕненме пултарайман. Йăлăхтарса çитерчĕ. Кунĕн-çĕрĕн укреплени тăзатпăр. Çĕр ăшне чаваланса кĕретпĕр. Çавтери хуйхăпа, çилĕпе ăсран тухасси те инçех мар».

* * *

Орел облаçĕнчи оккупациленĕ районсенче нимĕçсен мерзавецĕсем тунă хăрушă ĕçсем çинчен пĕлтерекен хыпарсем çитнĕ. Трубчевск хулинче гитлеровецсем больницăсене, аптекăсене тата магазинсене йăлтах хупса лартнă. Хулара ĕрекен чирсем сарăлса кайнă, вырлăх. Кунсеренех темиçе вунăшар çын вилет. Хулана никама та кĕртмеççĕ, никама та кăлармаççĕ, иглес мар текенсене вилĕмпе хăрataççĕ. Нимĕç салтакĕсем пÿртсене çĕмĕрсе кĕреççĕ, саратаççĕ, нимĕн айăпсăр çынсене вĕлереççĕ. Нимĕçсем совет граждăнĕсене ирĕксĕрлесе Германие чурасем вырăнне пулса ĕçлеме илсе каяççĕ. Вĕсен ачисем нимĕнсĕрех тăрса юлаççĕ, вĕсене пурне те хăрушă вилĕм кĕтсе тăрать.

* * *

Вена хули çывăхĕнчи лагерьсенче тăракан Австри салтакĕсем, вĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ярасси çинчен пĕлсен, пăлхав çĕкленĕ, пурне те киле салатса яма ыйтнă. Эсэсовецсен уйрăм чаçĕсене илсе пынă. Нумай салтаксене арестленĕ.

Июнĕн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пăлтăр улшăнусемех те пулман.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн часть висĕ кун хушшинчи çапăçусенче 350 гитлеровеца çити, 4 оруди, минометсен батарейине, 8 станковăй пулемет тата боеприпассем тиенĕ темиçе лав пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллерирен персе противник артиллерийĕн 9 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн артиллерирен персе противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 30 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Храмов юлташ командир пулса тăракан подразделенири зенитчиксем юлашки тăватă кун хушшинче нимĕçсен 8 бомбардировщикне персе антарнă. Вĕсенчен 5-ĕшне лейтенант Синицын юлташăн батарейĕнчи боецсем пĕтерсе тăкнă.

* * *

Анохин юлташ командир пулса тăракан чăçри артиллеристсем (Калинин фрончĕ) тĕл персе нимĕçсен 3 автомат-туппине, 5 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 26 блиндажа противникăн пехотипе пĕрлех çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 150 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Противникăн атакине сирсе пăрахнă чухне танкистсем Шматко тата Зайцев юлташсем нимĕçсен танксене хирĕç пемелли 4 орудине тата 50 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ, сасартăк пырса тапăнса, халăх пурăнакан В. пунктран нимĕçсен гарнизонне хĕссе кăларнă. Партизансем нимĕçсен боеприпассем хунă 4 складне, 3 орудине, 3 минометне пĕтерсе тăкнă, станковăй пулемет, винтовкăсемпе ытти хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Нимĕçсен 45 салтак тата 15 офицер вилсе пĕтнĕ.

* * *

Партизансен «Смерть фашизму» ятлă отрячĕ, Калинин облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, юлашки кунсем хушшинче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 3 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Д. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрядри партизансем, аэродром çине тапăнса, нимĕçсен 2 самолетне çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 13-мĕш танковăй дивизийĕн 43-мĕш мотоциклетнăй батальонĕнчи 4-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Гельмут Бауэр çапла каласа панă: «Эпĕ вăрçă пуçланнă кунсенчен тытăнсах фронтра. Сентябрь уйăхĕнче аманнăччĕ те икĕ уйăх госпитальре выртса ирттертĕм. Госпитальри врачсем мана çар службине юрăхсăр тесе йышăнчĕç те Бург хулине гарнизонри комиссие ячĕç. Врачсен комиссийĕнче гарнизонри врач çапла каларĕ: «Сирĕн пек çынсене хăтарма тытăнсан, вăрçă вăрçма пирĕн çын та юлмасть», терĕ. Хамăран чаçа таврăнсан, эпĕ хамăрăн ротăра малтанхи салтаксенчен 7 çын кăна тупрăм. Ыттисем вилнĕ е аманнă. Нумаях пулмасть самолетсем лармалли площадкăсенчен пĕринче Германирен транспорт самолечĕсемпе килнĕ маршевăй батальона партизансем вăйлăн аркатрĕç. Салтаксем самолетсем çинчен анса тавçăрса илме те ĕлкĕреймерĕç, партизансем вĕсем çине çавăнтах пырса тапăнчĕç».

* * *

Тул çутăлас умĕн гитлеровецсен ушкăнĕ Смоленск облаçĕнчи Титово ялне çĕмĕрсе кĕнĕ. Нимĕçсем ялти мĕнпур çынсене çийĕнчех юханшыв хĕрне хăваласа пухнă та 10 старике персе пăрахнă. Унтан гитлерла мерзавецсем аллисенче пĕчĕк ачасем тытса тăракан хĕрарăмсем çине пулеметсенчен пеме тытăннă. Анчах та фашистла çынçиенсемшĕн çакă та сахал пек туйăннă пулмалла. Вĕсем юнланса пĕтнĕ çын ÿчĕсен купи çине темиçе граната пăрахнă. Çав кун гитлерла палачсен аллинчен ялти 74 çын пĕтнĕ, вĕсем хушшинче 12 çула çитмен ачасем 19 ача пулнă.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Зенитнăй артиллерин 61-мĕш, 6-мĕш полкĕсенчен тата артиллерин 1-мĕш уйрăм дивизионĕнчен Гвардейски чаçсем тăвасси çинчен

Тăван Совет Çĕршывĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче зенитнăй артиллерин 61-мĕш, 6-мĕш полкĕсем тата артиллерин 1-мĕш уйрăм дивизионĕ çирĕплĕхпе паттăрлăхăн, дисциплинăпа организованноçăн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартрĕç.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, вĕсем фашистсен войскисене питех те пысăк çухатусем кÿчĕç, тăшмана аркатмаллах пыра-пыра çапса, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкрĕç, нимĕç оккупанчĕсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пычĕç.

Тăван Совет Çĕршывĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хастарлăх тата çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă та организованно пулнăшăн, личнăй составăн геройлăхĕшĕн асăннă полксенчен тата дивизионран Гвардейски чаçсем тунă. **Уйрăмăн илсен:**

1. Зенитнăй артиллерин 6-мĕш полкĕнчен—Зенитнăй артиллерин 1-мĕш Гвардейски полкĕ. Полк командирĕ—подполковник **В. П. Горский.**
2. Зенитнăй артиллерин 6-мĕш полкĕнчен—Зенитнăй артиллерин 2-мĕш Гвардейски полкĕ. Полк командирĕ—майор **Д. З. Осипчук.**
3. Артиллерин 1-мĕш уйрăм дивизионĕнчен,— Артиллерин 1-мĕш уйрăм Гвардейски дивизионĕ. Дивизион командирĕ—майор **К. В. Радовский.**

Асăннă полксене тата уйрăм артдивизиона Гварди ялавĕсем параççĕ.

Нимĕçсен инçетри тылĕнчи аэродромне тепĕр хут штурмланă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, (**ТАСС спецкорĕ**). Нумаях пулмасть пирĕн истребительсемпе штурмовиксем нимĕçсен инçетри тылĕнчи стационарнăй пысăк аэрдоромне вăйлăн пырса çапни çинчен пĕлтернĕччĕ. Çак кунсенче пирĕн летчиксем çак аэродром çине тепĕр хут вĕçсе пынă.

Группăна ертсе пыракан летчик-истребитель старши лейтенант Салов тăшманăн истребителĕсене хăй çине пыртарнă та тĕл тивертсе пĕр машинине персе антарнă, ыттисем вара тарса кайнă.

Пирĕн штурмовиксен пĕррремĕш ушкăнĕ, капитан Макарцев ертсе пынипе, бомбăсем ăнăçлăн пăрахса, нимĕç истребителĕсен тĕп ушкăнне сывлăша çĕкленме паман.

Аэродрома иккĕмĕш хут штурмлани, тăшман темĕн пекех вăйлăн хирĕç тăнă пулсан та, малтанхинчен те ăнăçуллăрах пулнă. Çĕр çинче тĕрлĕ йышши машинăсене 35-рен кая мар пĕтерсе тăкнă е хытă сиенленĕ, пысăк ангарăна вут тивертсе çунтарса янă.

СССР Верховный Совечĕнче В. М. Молотов юлташ тунă доклад пирки ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АНГЛИЯ

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англи пичечĕпе радио СССР Верховный Совечĕн ларăвĕ çинчен анлăн çутатаççĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташăн доклачĕ пирки нумай çыраççĕ. Лондонри хаçатсем, Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договора СССР Верховный Совечĕ пĕр шухăшлă пулса ырланине уйрăмах палăртса, В. М. Молотов юлташăн доклачĕ çинчен тĕплĕн çырнине чи курăнмалли вырăнта пичетленĕ. Англин информаци министерстви пĕлтерĕвĕнче палăртнă тăрăх, В. М. Молотов юлташ СССР Верховный Совечĕн ларăвĕнче тунă доклад Лондонра çак тĕлĕшпе хытă интереслентерет: «Молотов договор Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусен аталанăвĕнче кăна мар, тата Европăри халăхсем хушшинчи çыхăнусем малашне аталанса пырассинче политикăллă пысăк вырăнта тăнине кăтартса парать. Иден Сталинпа калаçса татăласси ăнăçлăн пулса иртни Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусене çĕнĕ тапхăра пуçарни çинчен Молотов каласа панине Лондонра чĕререн кăмăлласа кĕтсе илнĕ».

«Нимĕçсен подводнăй лодкисемпе самолечĕсем Совет Союзне валли грузсем турттарса пыракан хăшпĕр судносене путарнă пулсан та, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Англирен хĕçпăшалсемпе материалсем тăратасси ÿсни çинчен В. Молотов калани уйрăмах хавасланатарать» тесе çырать малалла информаци министерстви.

Юлашкинчен информаци министерстви çакна палăртать: «В. М. Молотов 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт тăвасси çинчен шăпах та Лондонпа Вашингтонра калаçса татăлнă пек каласа панă».

Лондонри радио, В. М. Молотов юлташăн доклачĕ çинчен тĕплĕн каласа кăтартса, СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн доклачĕ 1942 çулта гитлеризма аркатса тăкасса совет халăхĕ шанса тăнине палăртнине кăтартса парать. Лондонри радио В. М. Молотов виçĕ аслă держава вăрçăра пĕр-пĕринпе килĕштернин пĕрмаях ÿсее пыракан вăй-хăвачĕн результачĕсене гитлеровецсем часах хăйсен ĕнси çинче тÿссе курĕç тенипе килĕшет. «Совет халăхĕпе пĕрле,—тесе калать Лондонри радио,—кăçал тăшмана пĕтерсе тăкасси çинчен Сталин панă приказ пурнăçа кĕрĕ, тесе Молотов каланине эпир алă çупса кĕтсе илетпĕр».

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Америка пичечĕ Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ 1942 çулти июнĕн 18-мĕшĕнче СССР Верховный Совечĕн ларăвĕнче тунă доклад çинчен тĕплĕн çырать. «Нью-Йорк таймс» хаçат докладра мĕн калани çинчен пĕррремĕш страницăра, «Совет Союзĕ — Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договора ратификациленĕ» текен пысăк заголовокпа пичетлет. Çавăн пекех «Нью-Йорк геральд трибюн», «Дейли ньюс», «Дейли миррор» тата Америкăри ытти хаçатсенче те В. М. Молотов юлташăн доклачĕ çинчен тĕплĕн çырнă.

«Вашингтон пост» хаçат В. М. Молотов юлташ доклачĕн текстне çакăн пек заголовокпа пичетленĕ: «Молотов иккĕмĕш фронт инçетре мар тесе калана, виçĕ аслă держава—СССР, США тата Англи—вăрçăра пĕр-пĕринпе килĕштернин пĕрмаях ÿсее пыракан вăйхăватне гитлеровецсем часах хăйсен ĕнси çинче тÿссе курассине СССР Верховный Совечĕн ларăвĕнче кăтартса панă».

«Балтимор сэн» тата «ПМ» хаçатсем В. М. Молотов юлташăн докладĕнче Европăра 1942 çулта иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе халех тумалли задачăсем пирки пĕтĕмпех калаçса татăлни çинчен пĕлтерекен вырăнсене уйрăмах палăртаççĕ.

Çавăн пекех Америкăри радио та Верховный Совет сессинче В. М. Молотов юлташ тунă доклад çинчен нумай калать.

Америкăри пăлла радиокомментатор Стил çапла калать: СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ гитлеризма пĕтĕмпех çĕнтерессине шанса тăнă атмосферăра пулса иртнĕ, тет.

Радиокомментатор Лиза Сертио çакна кăтартса парать: В. М. Молотов доклачĕ, çавăн пекех Черчилль Вашингтона пыни Европăра иккĕмĕш фронт тăвассипе çыхăнса тăракан пысăк событи çывăх вăхăтрах пулассии çинчен каласа параççĕ, тет.

Германире кăçал тырăсем пулассине шанмаççĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Германире тухса тăракан хаçат-журналсем Германин ялхуçалăх ĕçĕсем начарри çинчен уççăнрах та уççăнрах çырма пуçланă. «Франкфуртер цейтунг» хаçат йышăннă тăрăх, «1942 çулта вырса илмелли тырпул Германин продовольстви тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне лайăхлатĕ тесе пĕрре те шанмалли çук». «Дейче фольсквирт» журнал пĕлтернĕ тăрăх, кăçал Германире кĕрхи тырă калчисем икĕ миллион гектар ытла юр айĕнчен шăнса пăсăлса тухнă. «Кĕркуннех кирлĕ чухлĕ акса хăвараймани, сивĕсем тунă сиенсем, çуртыррисене 6 эрне кая юлса тин акса пĕтерни—çакă вăл ялхуçалăхне питех те йывăр лару-тăру патне илсе çитерчĕ,—тесе çырать çав журнал.—Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен çынсем халран кайса ĕçлеççĕ. Çапла ĕçлени ялхуçалăхĕнчи рабочисемпе хресченсен сывлăхне пĕтерет. Ку кăна мар-ха. Апла ĕçлени—нумай хуçалăхсене чи таткăлă самантра пĕтерсе лартма пултарать».

«Ангрифф» хаçат çапла пĕлтерет: сад-пахчи çимĕçĕсен, çырласен, çу паракан культурăсен пысăк пайĕ сивĕпе пĕтнĕ.

Германи влаçĕсем, çитес кĕрте акса хăварма вăрлăхсем çитес çуккинчен хăраса, çапла пĕлтернĕ: 1942 çулта вырса илмелли 1941 çулти кĕркунне акса хăварнă урпапа тулла пĕтĕмпех кĕрхи вăрлăх валли конфискацилеççĕ,—тенĕ.

Германире çынсене массăллăн асаплантарса вĕлерни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германире «шанчăксăр çынсене» массăллăн асаплантарса вĕлереççĕ, çав çынсене нимĕçсен пĕлтерĕвĕсенче «коммунистсем» тесе ят параççĕ. Стокгольмра çапла шутлаççĕ: çакă вăл Германире гитлерла режима хирĕç оппозици ÿссе пынине кăтартса парать, теççĕ. Нумаях пулмасть гитлеровецсем Берлин таврашĕнчи Гроссдильфтельдра 258 çынна вĕлерни çинчен пĕлтернĕ. Çав çынсем вара, Германи пĕлтерĕвĕнче кăтартса панă тăрăх, Берлинра Совет Союзне хирĕç туса ирттернĕ митингра бомба пăрахса взрыв тума хатĕрленнĕ пулать. Апрель уйăхĕнче Мангеймра 15 çынна асаплантарса вĕлернĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПОЛЯКСЕНЕ ХАЙСЕН ТАВАН ЧĔЛХИПЕ КАЛАÇМА ЧАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕш. (ТАСС). Гитлерăн Данцигри наместникĕ Форстер çак çулти сентябрьтен пуçласа Данциг облаçĕнче Польша чĕлхипе калаçма чарасси çинчен пĕлтернĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç чĕлхине вĕренсе çитмен поляксене Данциг облаçĕнчен хăваласа яраççĕ.

ЛАВАЛЬ ФРАНЦУЗ РАБОЧИЙĔСЕНЕ ЧУРАЛĂХА СУТАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). «Форейн корреспонденц» бюллетень çапла пĕлтерет: Лаваль нумаях пулмасть 350.000 француз рабочийĕсене, пуринчен ытларах текстильщиксемпе металлистсене, Германие ирĕксĕрлесе ĕçлеме яма решени йышăннă. Лаваль хăйĕн сутăнчăкла çĕнĕ ĕçне француз халăхĕ умĕнче çакăнпа тÿрре кăларма пăхнă: Гитлер валли кăтартса панă чухлĕ рабочисем тупса памасан, Гитлер, Итали Франци территорийĕнчен çĕнĕ çĕрсем тытса илме ыйтни майлă пулатăп, тесе хăратнă. Анчах та Лаваль приказĕ тăрăх Германие яма рабочисем «тара тытмалли» кампани пуçлани, темĕнле хăратса çирĕп мерăсем йышăнсан та путланса пырать.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ЭМДЕН ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

Июнĕн 20-мĕшĕнче, çĕрле, Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Эмден çине тата Германин çурçĕр-хĕвеланăç енчи объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтереççĕ. Унсăр пуçне, Голландири аэдромсем çине те бомбăсем пăрахнă.

(ТАСС).

ЭМДЕНРА ТУНĂ ИШĔЛТЕРÿСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин разведка тăвакан самолечĕсем ÿкерсе илнĕ фотоÿкерчĕксем çакна кăтартса параççĕ: Англи самолечĕсем бомбăсем пăрахнипе Эмден хулипе портĕнче питех те пысăк ишĕлтерÿсем тунă. Подводнăй лодкăсем тăвакан верфе чылай сиенсем кÿнĕ. Промышленность предприятийĕсене нумай ишĕлтернĕ.

АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМ ФРАНЦИН ÇУРÇĔРТИ ПАЙĔ ÇИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕш. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июнĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла Англин «Бостон» йышши бомбардировщикĕсем, истребительсен нумай эскадрильисем хÿтĕлесе пынипе, Гавр çине пырса тапăннă.

Çавăн пекех июнĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла истребительсем Булонь, Кале тата Дюнекрк районĕ çине пырса тапăннă.

Всевобуч боецĕсем кросса активлăн хутшăнчĕç

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Древкомбинатри всевобуч подразделенинчи боецсем Пĕтĕм Союзри 2-мĕш кросса пурте хутшăнчĕç. Кросс пуçланас умĕн тăтăшах тренировкăлла занятисем туса ирттерни вĕсене лайăх результатсем илме май пачĕ. Кросра хутшăннисенчен 1000 метр чупса тухассипе нормăна 93 процент, граната ывăтассипе 97 процент панă, пластунла шăвассипе пурте нормăна панă.

1000 метр чупассипе пĕррремĕш вырăна Ярзаев юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири боец Касе пашин йышăнчĕ. Вăл асăннă дистанцие 2 минута та 43 секундăра чупса тухнă. Иккĕмĕш вырăна Щеглова Шарасьпил йышăнчĕ. Вĕсен вăхăчĕ — 2 минута та 55 секунда.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии" звенине тума

Республикăри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсемпе совхозсенче самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа-тенкĕ пухас ĕç вăйлансах пырать.

25 районран тăратнă сведенисем тăрăх, июнĕн 22-мĕш тĕлне пурĕ 480.000 тенкĕ укçа пухăннă. Укçа пухас ĕçĕшпе чылай районсем аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ, малта пыраççĕ. Чкаловски район 63 пин, Порецки—61 пин, Калинински—55 пин, Сĕнтĕр—49 пин, Элĕк—43 пин, Ишлей—30 пин тенкĕ пухнă.

Анчах хăшпĕр районсем ку ĕçе çителĕклĕ организацилеймен-ха. Улатăр районĕнче мĕнпурĕ те 2 пин кăна пухăннă. Куславккапа Первомайски районсем те инçех кайман, 3-шер пин тенкĕ кăна пухма ĕлкĕрнĕ. Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Вăрмар районĕсем 5-шер пин пухса панă.

Тăвай, Йĕпреç, Шупашкар, Советски, Канаш районĕсенче самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа пухас ĕçе начар ертсе пыраççĕ.

Самолетсен звенине туни хальхи вăхăтра мĕнле вырăн йышăнса тăни пурне те паллă. Çавăнпа укçа пухас ĕçе кашни районрах тивĕçлипе организацилемелле.

* * *

ЭЛĔК. Ишлей райцентрĕнчи хĕрарăмсен подразделенийĕ самолетсен звенине тума чĕнсе каланине районри колхозсемпе учрежденисенче пур çĕрте те сÿтсе-яваççĕ. Укçа парас ĕç вăйлансах пырать. Паянхи куна районĕпе 40.000 тенкĕ укçа пухса банка хывнă. Жданов ячĕпе тăракан колхозра 1.500 тенкĕ, «Трактор» колхозра 1.250 тенкĕ, «Безбожник» колхозра 1.425 тенкĕ, «Хăват» колхозра 2.000 тенкĕ пухса панă.

Ишлеецсен чĕнĕвне Вырăс Сурăмри тата Элĕкри хĕрсен подразделенийĕсенче сÿтсе-явнă. Вырăс Сурăмĕнче вĕренекенсем 33 çын 1.000 тенкĕ пухса банка хывнă.

Самолетсен звенине тума уйрăм колхозниксем 200—300-шер тенкĕ параççĕ. «Первое мая» колхоз председателĕ Семенов юлташ 250 тенкĕ, «Трактор» колхоз председателĕ М. Петров 200 тенкĕ, «Ворошилов» колхоз председателĕ Антонов 150 тенкĕ панă. Вырăс Сурăмĕнче çар ĕçне вĕренекен хĕрсем А. Бочкова, М. Карташова 50-шар тенкĕ, Элĕк райцентрĕнче вĕренекен Е. Золотова 100 тенкĕ, А. Петрикова 50 тенкĕ, Е. Кузнецова 50 тенкĕ пачĕç.

С. ДУБИНИН.
ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

М. Горький вилнĕренпе 6 çул тултарнине паллă туни

КАНАШ, июнĕн 19-мĕш. (**Телефонпа**). Вырăссен аслă писателĕ Максим Горький вилнĕренпе 6 çул тултарнине вагонсем юсакан заводри пур цехсенче те паллă турĕç. 29-мĕш номерлĕ вăтам шкулти преподавательсем М. Горький пурнăçĕпе творчестви çинчен рабочисем хушшинче докладсемпе калаçусем ирттерчĕç.

Июнĕн 18-мĕшĕнче, тавар комбиначĕн хĕрлĕ кĕтесĕнче инженерла-техникла работниксен вечерĕ пулчĕ. Унта совет писателĕсен союзĕн членĕ Ю. Смирнов юлташ «Максим Горький—пролетариллĕ аслă писатель» темăпа доклад туса пачĕ.

П. Н.

Пĕлтерÿ

Июнĕн 24-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре Советсен çуртĕнчи ларусен залĕнче «Лăпкă океан çинчи вăрçă» темăпа тÿлевлĕ лекци пулать.

Лекторĕ **АЙЗЕНШТАДТ** юлташ.

Билет хакĕ — 1 тенкĕ.

Билетсене ВКП(б) Хула комитечĕн агитпунктĕнче (Чувашская урам, 6) илме пулать.

ВКП(б) Шупашкар Хула Комитечĕ.

Ответлă редакторшăн **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

Коллектив сотрудников Чувашпромснаба извещает о смерти сотрудника Чувашпромснаба

СОЛДАТОВА,
Николая Ивановича,

последовавшей после тяжелой и продолжительной болезни, и выражает соболезнование жене и семье покойного.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕ ФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 843 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. л.